Муркаш район хаҫачӗ

# Ҫӗнтерӳ ялавӗ

1944 ҫулхи майӑн 5-мӗшӗнченпе тухать

5 (7645) № * Юн кун, 2009 ҫулхи январӗн (кӑрлач) 21-мӗшӗ * Хакӗ ирӗклӗ

Районта

## Ҫамрӑксен – хӑйсен ҫулталӑкӗ

Раҫҫей Федерацийӗн Президенчӗн Указӗпе 2009 ҫула Ҫамрӑксен ҫулӗ тесе палӑртнӑ. Иртнӗ эрне вӗҫӗнче ҫак указа пирӗн районта еплерех пурнӑҫласси ҫинчен сӳтсе явма ҫамрӑксем пухӑнчӗҫ. Районта ҫамрӑксен парламенчӗ, вӗрентӳ, ҫамрӑксен политики, физкультурӑпа спорт пайӗ кӑҫалхи ҫул ял тӑрӑхӗсенчи ҫамрӑксен канашӗсемпе тата ӗҫлекен ҫамрӑксен канашӗсемпе тачӑ ӗҫлесси ҫине тимлӗх ытларах уйӑрма палӑртса хӑварчӗҫ.

Ҫамрӑксен планӗнче ҫак ҫул Мускаври иртекен Раҫҫей ҫамрӑкӗсен фестивальне хутшӑнасси те. Паян вара район администрацийӗн ларусен залӗнче Муркаш районӗнче Ҫамрӑксен ҫулталӑкне савӑнӑҫлӑ лару-тӑрура уҫаҫҫӗ.

ЧР Президенчӗн стипендиачӗсем



## Ял хуҫалӑхӗ малалла каясса шанатӑп

***Эсир сӑн ӳкерчӗкре куракан Алина Николаевна Федорова Чӑваш патшалӑх ял хуҫалӑх академийӗнчен вӗренсе тухни виҫӗ ҫул кӑна-ха, анчах ял хуҫалӑхне ачаран юратса ҫитӗннӗ хӗр хӑй ялта пурӑнас тесех суйласа илнӗ ҫултан пӑрӑнма шутламасть. Ҫакӑнта аслисем тата хӑйсен ҫывӑх тӑванӗ Социализмла Ӗҫ Геройӗ О. Федорова хывнӑ ҫул та ӑна килӗшет.***

***– Ял пурӑнсан ҫӗр-шыв пурӑнать. Ял хуҫалӑхӗ вара малалла каясса шанатӑп, – пулчӗ кӗске хурав ЧР Президенчӗн стипендиаткин, Е. Андреев ячӗллӗ ял хуҫалӑх производство кооперативӗн тӗп бухгалтерӗн Алина Николаевна Федорован.***

**А. БЕЛОВ сӑн ӳкерчӗкӗ.**

Республикӑра

## Пилот проектне алӑ пуснӑ

Чӑваш Республикин Президенчӗ Николай Федоров кӑҫалхи январӗн 19-мӗшӗнче «Чӑваш Республикинче ял тӑрӑхӗсенче ҫурт-йӗре комплекслӑ майпа компактлӑ лартас тата вӗсене тирпей-илем кӗртес енӗпе пилот проекта пурнӑҫласси ҫинчен» Указа алӑ пуснӑ.

«Ҫӗр ӗҫченӗн ҫулталӑкӗпе ҫыхӑннӑ шухӑша аталантарса паян эпӗ республикӑра ял тӑрӑхӗсенчи комплекслӑ строительство тата вӗсене хӑтлӑх кӳрес енӗпе ӗҫлемелли пилот проекта алӑ пусрӑм. Вӑл ял тӑрӑхӗсенче хӑтлӑх шайне малалла ҫӗклес, унти пурнӑҫа илӗртӳллӗрех тӑвас, ялсен территорийӗсен инвестици хастарлӑхне ӳстерес тӗллевлӗ»,– пӗлтернӗ Николай Васильевич Министрсен Кабинечӗн членӗсемпе тата федераци ведомствисен территори органӗсен ертӳҫисемпе иртнӗ тунти кунхи канашлура.

Ҫак проект Патшалӑхӑн 2008–2012 ҫулсенче ял хуҫалӑхне аталантармалли, ял хуҫалӑх продукцийӗн, чӗр тавар тата апат-ҫимӗҫ рынокӗсене йӗркелемелли программин мероприятийӗсемпе килӗшсе тӑрать.

Указпа килӗшӳллӗн территорисене конкурс мелӗпе суйласа илӗҫ. Проекта хутшӑнакансем валли урамсенчи ҫулйӗр сетьне аталантарма, социаллӑ пурнӑҫпа культура, шыв объекчӗсем тума тата реконструкцилеме, ял тӑрӑхӗсене хӳтлӗх кӳме, ҫивӗч ытти ыйтӑва татса пама субсидисем уйӑрмашкӑн палӑртнӑ.

Ҫӗнӗлӗхсемпе паллаштаратпӑр

## Виҫӗ кун хушшинче пӗлтерме тивӗҫ

Район территорийӗнче хӑйсен ӗҫне-хӗлне туса пыракан предприятисемпе организацисен ертӳҫисене ҫавӑн пирки пӗлтересшӗн. Раҫҫей Федерацийӗн «Раҫҫей Федерацийӗнче ҫынсене ӗҫпе тивӗҫтерессии ҫинчен» саккунӗн 25-мӗш статйин 2-мӗш пунктне улшӑну кӗртнӗ. 2008 ҫулхи декабрӗн 25-мӗшӗнче йышӑннӑ 287-ТЗ Федераллӑ саккунпа килӗшӳллӗн тулли мар ӗҫ кунӗн (сменин) е (тата) тулли мар ӗҫ эрнин режимӗпе усӑ курма тытӑнсан, производствӑна чарса лартсан ӗҫ паракан кун пирки йышӑну тунӑранпа виҫӗ кунран кая юлмасӑр ҫырупа ҫырса ӗҫпе тивӗҫтерекен центр службине пӗлтерме тивӗҫ.

Информацие патшалӑх учрежденийӗсене – муниципаллӑ йӗркелӳсен территорийӗнче вырнаҫнӑ ӗҫпе тивӗҫтерекен центрсене ҫитереҫҫӗ. Чӑваш Республикипе пӗтӗмлетнӗ пӗтӗмӗшле информаци вара эрнесерен Чӑваш Республикин Министрсен Кабинетне, Чӑваш Республикин Прокуратурине тата Раҫҫей Федерацийӗн Правительствине пырса тӑрать.

**Т. АНТОНОВА,**
**районти ӗҫпе тивӗҫтерекен центр директорӗ.**

Пенси ыйтӑвӗсемпе

## Социаллӑ услугӑсем. Кирлӗ е кирлӗ мар?

2008 ҫулхи декабрӗн 22-мӗшӗнче «Граждансен уйрӑм категорийӗсен пурлӑх шайне ӳстерес тӗллевпе Раҫҫей Федерацийӗн уйрӑм законодательство акчӗсене улшӑнусем кӗртесси ҫинчен» 269-ФЗ № Федераллӑ саккун йышӑннӑччӗ. Ҫавна май 2009 ҫулхи январӗн 1-мӗшӗнчен тытӑнса социаллӑ услугӑсем илсе тӑрассинчен хӑтарма ыйтса заявлени ҫырмалли йӗркесем улӑшӑнчӗҫ.

Саккунӑн 10-мӗш статйин 2-мӗш пункчӗн положенийӗсемпе килӗшӳллӗн 2009 ҫул валли социаллӑ услугӑсен илсе тӑрассинчен хӑтарма ыйтса заявлени ҫырнӑ пулсан, вӑл 2009 ҫулхи январӗн 1-мӗшӗнчен тытӑнса 2009 ҫулхи декабрӗн 31-мӗшӗччен кӑна мар, хыҫҫӑнхи ҫулсемшӗн те вӑйра шутланать. Тепӗр майлӑ каласан, гражданин эмелсем илмелли е чукун ҫул транспорчӗпе ҫӳремелли услугӑсемпе усӑ курасси пирки заявлени ҫырса париччен хыҫҫӑнхи ҫулчченех. Ҫапла вара гражданина социаллӑ услугӑсем хыҫҫӑнхи ҫулсенче те кирлӗ мар пулсан, 2009 ҫулта унӑн социаллӑ услугӑсем кирлӗ марри пирки заявлени ҫырса памалла мар.

Унчченхи пекех социаллӑ услугӑсем кирлӗ марри е вӗсене илме тытӑнасси пирки заявленисене октябрӗн 1-мӗшӗнчен ҫырса парас пулать. Енчен те гражданинран 2008 ҫулта заявлени пулман пулсан, 2009 ҫулхи январӗн 1-мӗшӗнчен тытӑнса ӑна уйӑхсерен укҫан тӳленӗ чухне социаллӑ услугӑсен суммине тытса юлаҫҫӗ. Вӑл заявлени ҫырса париччен ҫулхи декабрӗн 31-мӗшӗччех ку ҫапла юлать.

Сӑмахран, Н.В. Васильев гражданин 2008 ҫулхи октябрӗн 1-мӗшӗччен 2009 ҫулта социаллӑ услугӑсем кирлӗ марри пирки заявлени ҫырса панӑ тейӗпӗр. Хыҫҫӑнхи ҫулсенче те социаллӑ услугӑсем кирлӗ мар пулсан, унӑн 2009 ҫулхи октябрӗн 1-мӗшӗччен ҫӗнӗрен заявлени ҫырмалла мар. 2010, 2011 тата ытти ҫулсем валли те ку йӗрке ҫаплипех сыхланса юлать, эмелсем тӳлевсӗр илсе тӑма е чукун ҫул транспорчӗн услугипе усӑ курма заявлени ҫырса париччен.

Тепӗр тӗслӗх илсе пӑхар. Н.В. Васильев 2011 ҫулта эмел илмелли услугӑпа усӑ курасшӑн пултӑр. Кун пек чухне унӑн 2010 ҫулхи октябрӗн 1-мӗшӗччен ҫавна валли заявлени ҫырса парас пулать.

Гражданин социаллӑ услугӑсем илессинчен хӑтарма е вӗсене пама ыйтса заявление Раҫҫей Пенси фончӗн территори органне хӑй те е саккунпа пӑхнӑ ытти мелпе те ҫырса пама пултарать. Пенси фончӗн территори органне хӑй пырайманскер пулсан вара ҫын кам пулнине тата гражданин хӑй алӑ пуснине нотариус е ку енӗпе РФ Пенси фончӗпе килӗшӳ тунӑ орган ҫирӗплетсе пани кирлӗ.

**Н. СЕМЕНОВА,**
**Раҫҫей Пенси фончӗн районти уйрӑмӗн пенсисем шутласа парас тата тӳлес енӗпе ӗҫлекен пайӗн пуҫлӑхӗ.**

## Ҫырӑнтару – 2009

**Хаклӑ вулакансем! Сире ҫавна аса илтеретпӗр. Енчен эсир район хаҫатне январь уйӑхӗнчен илсе тӑма ҫырӑнма ӗлкӗреймен пулсан, питех шиклемме кирлӗ мар. Ӑна февраль уйӑхӗнчен илсе тӑма та ҫырӑнма пулать. Малашне те пӗрлех пуласчӗ!**

**Райхаҫат редакцийӗ.**

Информаци кунӗ

## ЧР Президенчӗн Ҫырӑвӗпе паллаштарчӗҫ

Республикӑри пекех, пирӗн районта та паян пӗрлехи информаци кунӗ иртет. Унӑн теми – ЧР Президенчӗ республикӑн Патшалӑх Канашне янӑ «Чӑваш Ен ҫитӗнӗвӗсем – кашнин пуҫарулӑхӗнче» Ҫырӑвӗ. Тӗл пулусенче кунпа пӗрлех республикӑра пурӑнакансене социаллӑ пулӑшу парасси, ял тӑрӑхӗсенче учетра тӑракан ҫемьесен пурӑнмалли ҫурт-йӗр условийӗсене лайӑхлатасси пирки те сӑмах пырӗ. Ӗҫлӗ ушкӑнсем Муркаш, Москакасси, Мӑн Сӗнтӗр ял тӑрӑхӗсенче пулса кураҫҫӗ, 2009 ҫулта ЧР Президенчӗн стипендийӗсене тивӗҫнисене район администрацийӗнче стипендиатсен ячӗсем парасҫӗ.

2010 ҫулхи халӑх ҫыравӗ

## Хатӗрленӳ ӗҫӗсем пыраҫҫӗ

2002 ҫулхи январӗн 25-мӗшӗнче йышӑннӑ «Пӗтӗм Раҫҫейри халӑх ҫыравӗ ҫинчен» 8-ФЗ Федераллӑ саккунпа килӗшӳллӗн тата Раҫҫей Федерацийӗн 2006 ҫулхи январӗн 11-мӗшӗнчи, Чӑваш Республикин Министрсен Кабинечӗн 2008 ҫулхи мартӑн 7-мӗшӗнчи йышӑнӑвӗсене тӗпе хурса, 2010 ҫулхи Пӗтӗм Раҫҫейри халӑх ҫыравне йӗркеллӗ ирттерме хатӗрленес тӗллевпе район администрацийӗн пуҫлӑхӗ 2008 ҫулхи апрелӗн 14-мӗшӗнче йышӑну турӗ.

Йышӑнупа килӗшӳллӗн Чӑвашстат предприятийӗсен статистика пайӗ районта ҫырава йӗркеллӗ хатӗрленсе иртерессишӗн ответлӑ пулса тӑрать. Ҫырав иртерме районта комисси йӗркеленӗ. Ӑна район администрацийӗн пуҫлӑхӗ Ю.А. Иванов ертсе пырать. Комисси членӗсем сакӑр ҫын. Ҫавӑн пекех комисси пирки калакан положение ҫирӗплетнӗ.

Вырӑнсенче те ҫырава хатӗрленсе кӗтсе илессипе туса иртермелли ӗҫсене пурнӑҫлама ял тӑрӑхӗсен пуҫлӑхӗсен йышӑнӑвӗсемпе ҫырав комиссийӗсене йӗркеленӗ. Районти ҫырав комиссийӗн йӗркелӳ ларӑвӗнче комиссин 2008 ҫулхи ӗҫ планне ҫирӗплетрӗмӗр, комисси членӗсен пурнӑҫламалли ӗҫӗсене уҫӑмлатрӑмӑр.

Халӑх ҫыравне иртерессипе хатӗрленӳ ӗҫӗсем хӗрӳ тапхӑрта. Ҫыравӑн вӑхӑтлӑх ӗҫченӗсем хӑйсен тивӗҫӗсене кирлӗ пек пурнӑҫлачтӑр тесен, ялсенчи адрес хуҫалӑхӗ йӗркеллӗ шайра пулмалла. Адрес хуҫалӑхӗ мӗнле шайра пулнине палӑртма унӑн мониторингне иртертӗмӗр. Ял тӑрӑхӗсен специалисчӗсем, культура учрежденийӗсен ӗҫченӗсем ялсем тӑрӑх ҫӳрерӗҫ, ялсен, урамсен ячӗсем, ҫуртсен номерӗсем пуррипе ҫуккине тӗрӗслерӗҫ. Декабрӗн 15-мӗшӗ тӗлне уйрӑм ҫынсен 14,2 пин ҫурт-йӗрне тӗрӗсленӗ е 100 проценчӗпех. 12,8 пин ҫуртӑн номерӗсем кӑтартнисем йӗркеллех. 1303 ҫуртӑн номерӗсем ҫукки палӑрчӗ. Урам ячӗсене кӑтартнисем 87 ҫурт ҫинче ҫукчӗ. Мониторинг енӗпе адрес хуҫалӑхне йӗркене кӗртсе ҫитерес ӗҫсем малалла пыраҫҫӗ.

Ҫырава хатӗрленсе туса иртермелли тепӗр пысӑк ӗҫ вӑл – шалти ӗҫсен пайӗн тата миграци службин сотрудникӗсем граждансем пурӑнакан вырӑнта регистрацие тӑмалли тата регистрацирен тухмалли правилӑсене мӗнле пӑхӑннине тӗрӗслесе тӑрасси. Иртнӗ тапхӑрта кун пек тӗрӗслевсене 15 ял тӑрӑхӗнчи 95 ялта иртернӗ. 30 ҫынна хуҫалӑх кӗнекине ҫырса хуманни тата списока кӗртменни палӑрчӗ, 9 ҫынна хуҫалӑх кӗнекинчен кӑларманни тупӑнчӗ. Ҫырав пуҫаринченех ҫак ӗҫе малашне те туса пыма палӑртнӑ.

Тӗп задачӑсенчен пӗри ҫынсене ҫырав пирки тулли информаципе тивӗҫтересси пулса тӑрать. Ку енӗпе те сахал мар туса иртернӗ ӗнтӗ. Район администрацийӗн Интернет сайтӗнче «2010 ҫулхи Пӗтӗм Раҫҫейри халӑх ҫыравӗ» баннер йӗркеленӗ. Хатӗрленӳ ӗҫӗсем епле пыни пирки район хаҫачӗ урлӑ та пӗлтерсех тӑратпӑр. Район пуҫлӑхӗ ҫумӗнчи ял тӑрӑхӗсен пуҫлӑхӗсен канашӗн ларӑвӗнче икӗ хутчен тухса каласнӑ. Халӑх ҫыравӗ пирки 32 стенд туса хатӗрленӗ. Вӑл шутран 1 – патшалӑх статистикин органӗнче, 10 – ял тӑрӑхӗсенче, 9 – Культура ҫурчӗсенче, 12 – библиотекӑсенче.

Ҫавна та асӑнса хӑварнӑ пулаттӑм. Район администрацийӗн пуҫлӑхӗн йышӑнӑвӗпе 2010 ҫулхи Пӗтӗм Раҫҫейри халӑх ҫыравне хатӗрленсе адрес хуҫалӑхне йӗркене кӗртсе ҫитерессипе смотр-конкурс иртерме палӑртнӑ.

**З. ВИНОГРАДОВА,**
**Чӑвашстатӑн предприятисен статистикин Муркаш районӗнчи пайӗн тӗп специалист-эксперчӗ.**